# Ыттисемшĕн тĕслĕх

Сывлăх

*Районти тĕп больницăн стоматологи уйрăмĕнче вуншар çул ытла медицина сестринче вăй хуракан (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) Светлана Витальевна Ярухинăпа Алина Николаевна Иванова чирлисемпе ялан тараватпулнипе, хăйсен ĕçне лайăх пĕлнипе палăрса тăраççĕ. Çавăнпа кунта килекенсенчен вĕсем тĕлĕшпе яланах тав сăмахĕ çеç илтме пулать.*

*Ĕçчен медсестрасем пушă вăхăтра район пурнăçĕпе те кăсăкланса тăраççĕ. Кунта «Сĕнтерӳ ялавĕ» – вĕсен пирвайхи тусĕ.*

А. БЕЛОВ
сăн ӳкерчĕкĕ.



Тирпейлĕхпе тасалăхшăн

# Тавралăх хăтлăхĕпе илемлĕхĕ хамăршăнах

Районти санитарипе эпидемиологи комиссийĕ палăртнă тăрăх ялсен территорийĕсене йĕркеллĕ тасатса тăрасси экологи тата санитарипе эпидемиологи тĕлĕшĕнчи йĕркелĕхе тивĕçтерессинчи, тавралăха сыхлассинчи тĕп мероприятисенчен пĕри пулса тăрать. Çак ыйтăван пĕлтерĕшĕ пĕчĕк мар. Республика шайĕнче те ăна пысăк вырăн уйăраççĕ.

Пирĕн республикăра «Чăваш Республикинче 2010 – 2015 çулсенче экологи хăрушсăрлăхне ӳстерессси» тĕллевлĕ программа йышăннă. Асăннă программăн тĕп пайĕсенчен пĕри шăпах ĕнтĕ йăла каяшĕсене пухассине, илсе кайассине, вырнаçтарассине йĕркелессипе çыхăннă.

Районта ялсен территорийĕсене тасатса тирпейлессипе тата кирлĕ шайра тытса тăрассипе, санитари тĕлĕшĕнчен тасатассипе уйрăм ĕçсем туса ирттереççĕ. Çав тĕллевпех ĕнтĕ кăçал район администрацийĕн пуçлăхĕ «Ялсене тирпей-илем кĕртессин тата йывăççем лартассин уйăхлăхĕ çинчен», «Муркаш районĕнчи ялсене симĕслетессипе тата тирпей-илем кĕртессипе районти смотр-конкурс ирттересси çинчен» йышăнусем тунă. Çак йышăнусем хут çинче кăна юлмалла мар. Вĕсене вырăнсенче çирĕп пурнăçласа пыни кирлĕ.

Район территорийĕнче йăлари хытă каяшсен полигонĕ хута кайрĕ. Вăл Ивановка ялĕ патĕнче вырнаçнă. Ку полигон – 4 – 5 класлă хăрушлăхри каяш валли. Полигон ĕçне «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ йĕркелесе туса пырать.

Предприяти йăла каяшне пухма, илсе кайма, сиенсĕрлетме, вырнаçтарма 5 çуллăх ятарлă лицензи илнĕ. Кунта производство тĕрĕслевĕн программине туса хатĕрлесе çирĕплетнĕ. Производство тĕрĕслевĕ туса ирттерме гигиенăпа эпидемиологи центрĕпе килĕшӳ тунă. Йăла каяшĕсен полигонĕпе усă курассин технологийĕн регламентне çирĕплетнĕ.

Хальхи вăхăтра йăла каяшĕсене Мăн Сĕнтĕрти, Тренккăри, Москакассинчи, Муркашри, Нискассинчи, Йӳçкассинчи нумай хваттерлĕ çуртсем патĕнчен пухса тиесе турттарассине йĕркеленĕ. Çавăнпа пĕрлех ку енĕпе пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕпе организацисем, учрежденисем тата предприятисем 102 килĕшӳ тунă.

Çапах та йăла каяшĕсене полигона турттарасси районĕпе пĕтĕмĕшле илес пулсан йĕркеллĕ пулса пырать теме çук. Ытларах ял тăрăхĕсенче каяша централизациленĕ майпа илсе тухассине йĕркелемен-ха.

Район администрацийĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн тата ялсен территорийĕсене санитари тĕлĕшĕнчен йĕркеллĕ тытса тăрас тĕллевпе районта çулленех ялсене тирпей-илем кĕртессипе тата санитари тĕлĕшĕнчен тасатассипе уйăхлăх, «Чи лайăх ял», «Чи лайăх предприяти е организаци», «Чи лайăх уйрăм хуçалăх» конкурс ирттереççĕ. Çапах та тасалăхпа тирпейлĕх ĕçне конкурссемшĕн кăна туса пымалла мар. Ку вăл кашнин тата кулленхи ĕçĕ пулса тăмалла.

Районта медицина ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă юридици вăйĕнчи учрежденисем иккĕ. Кусем вĕсем районти тĕп больница тата районти 2-мĕш номерлĕ больница. Кунпа пĕрлех районти тĕп больницăн структуринче участок больници 1, пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсем 9 тата фельдшерпа акушер пункчĕсем 37. Сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсенче çулленех пухăнакан медицина каяшĕсене инвентаризацилессине йĕркеленĕ. Иньекци валли усă курнă пĕр хут усă курмалли шприцсене дезинфекци тунă хыççăн «Экология» производство комплексне ăсатаççĕ. Усă курнă медицина каяшĕсене йышăнма килĕшӳсем тунă.

Район территорийĕнче промышленноç предприятийĕсенчен «Муркашри кипĕч завочĕ» акционерсен уçă обществине, А. Вязов уйрăм предпринимателĕн каминсем хатĕрлекен цехне, «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» акционерсен хупă обществине, «Магма» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн тимĕр шăратмалли цехне асăнса хăвармалла.

Промышленноç каяшĕсене предприятисен территорийĕсенче айне сарнă ятарлă вăхăтлăх площадкăсенче тытаççĕ. Хыççăн вара «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕнче килĕшӳ туса йăла каяшĕсен полигонне турттарса каяççĕ. Тимĕр-тăмăра шăратма Шупашкара ăсатаççĕ. А. Вязов уйрăм предпринимателĕн предприятийĕнче производство каяшĕсене (тусан, пăчкă кĕрпи, хăма таткисем, ДВП, ДСП) производство пӳлĕмĕсене хутса ăшăтма усă кураççĕ. Çавăн валли «Гефест 400» газогенератор установки вырнаçтарнă.

Медицина, вĕрентӳ учрежденийĕсенче люминесцентлă лампăсене ятарлă пӳлĕмсенче пухассине йĕркеленĕ. Пухăннă май вĕсене Шупашкарти «Меркурий» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна ăсатаççĕ. Пур предприятисемпе организацисем тата учрежденисем те ртутьлă каяшсене пухмалли тата сиенсĕрлетмелли условисене пăхăнаççĕ.

Роспотребнадзорăн территори пайĕн специалисчĕсем районти 10 ял тăрăхĕн территорийĕсене тасатмалли генеральнай схемăсене туса хатĕрлесе çирĕплетнĕ. Кун пек схемăсем Катькас, Мăн Сĕнтĕр, Оринин, Çатракасси, Шетмĕпуç, Ярославка ял тăрăхĕсен кăна çук.

Ял тăрăхĕсен территорийĕсенче хальхи вăхăтра тирпей-илем ытăвĕ кирлĕ шайра пулманнине палăртрăм ĕнтĕ. Уйрăмах çакна йăла каяшĕсене пухса турттарас тĕлĕшпе каламалла. Çавна май çӳп-çапа çынсем шырлансемпе варсене кая-кая пăрахаççĕ. Çакă вара сывăхри çăл куççемпе шыв тăракан вырăнсене варалать, çынсен сывлăхне сиен кӳрет.

Кун пек йĕркесĕрлĕхпе ниепле те килĕшсе пурăнма май çук. Вырăнсенчи тасалăхпа тирпейлĕх чи малтанах ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ответлăхĕнчен килет. Санитари тĕлĕшĕнчен тасатас тата санкцилемен çӳп-çап вырăнĕсене пĕтерес тĕллевпе пур ял территорийĕсен инвентаризацине ирттерес пулать. Кашни ял тăрăхĕн территорийĕн тасатмалли генеральнай схемăсем пулмалла. Тавралăха варалакансенчен вара çирĕппрех ыйтас пулать. Манас марччĕ: санитари тĕлĕшĕнчи тасалăх, тирпейлĕх, илемлĕх вăл никамшăн та мар, хамăршăнах.

**Г. ВОРОБЬЕВА,**
**районти санитарипе эпидемиологи комиссийĕн секретарĕ.**

# Пирĕн пата пĕлтерĕр

Юлашки вăхăтра уйрăм çынсем Раççей Федерацийĕн патшалăх Пенси фончĕн сотрудникĕсем ячĕпе агитаци ĕçĕсене ирттернĕ тата килĕшӳсем тунă тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ. Кун пирки çавна пĕлтеретпĕр. РФ патшалăх Пенси фончĕн ĕçченĕсем нумай хваттерлĕ çуртсен кил хушшийĕсенче тата подъездсенче ку ĕçе туса ирттермеççĕ. Кун пек фактсемпе тĕл пулсан çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Муркаш ялĕ, Октябре 50 çул урам, 23 а çурт. Е 63-0-41, 62-1-91 телефонсемпе шăнкăравлăр.

**Раççей Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

Ларуран

# Çĕр пушă выртмалла мар

Юлашки вăхăтра ял хуçалăхĕнчи çĕрсемпе тухăçлă усă курасси, пушă выртакан çĕр лаптăкĕсене пусă çаврăнăшне кĕртесси çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Вăрттăнлăх мар, кун пек çĕр лаптăкĕсем вара хальлĕхе ял тăрăхĕсен территорийĕсенче çук мар-ха. Çавăнпах ĕнтĕ вырăнсенче çĕрпе мĕнле усă курнине тĕрĕслеме, ку тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма районта ятарлă комисси йĕркеленĕ. Комисси членĕсем вырăнсене тухса та тĕрĕслевсем йĕркелеççĕ, ответлисене чĕнсе комисси ларăвĕсене те ирттереççĕ. Тĕрĕслев итогĕсем кăтартса панă тăрăх Ильинка, Шетмĕпуç тата ытти ял тăрăхĕсен территорийĕсенче унччен усă курман çĕр лаптăкĕсене сухаласа акса тума тытăнас тĕллевпе çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Комиссин июлĕн 2-мĕшĕнче иртнĕ ларăвĕнче Ярославка ял тăрăхĕн территорийĕнче çĕрсемпе мĕнле усă курнине тишкерчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, экономика, агропромышленноç комплексне аталантарассин тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕ Владислав Ананьев Ярославка ял тăрăхĕн территорийĕнче те усă курман çĕр лаптăкĕсем пуррине палăртрĕ.

– Ку тĕлĕшпе ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çирĕп позици йышăнас пулать, – палăртрĕ вăл.

Пай çĕрĕсемпе усă курассипе çирĕп йĕрке çук. Усă курман кун пек çĕрсене документсем хатĕрлесе çитерсе ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçарса пĕтерес пулать. Çак ĕçсене кăçал вĕçлес задача тăрать. Ку ĕç июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçăнчĕ ĕнтĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Георгий Кожевников усă курман çĕрсем Чемей енче çукпа пĕреххине палăртрĕ. Анчах та «Сеятель» хуçалăх пулнă территорире Нискасси енче кун пек çĕрсем самаях. Усă курман çĕр участокĕсен списокне район хаçатĕнче пичетлесе кăларнă. Унччен пай çĕрне илме заявлени çырнă çын халĕ çĕр участокĕ кирлĕ марри пирки пĕлтерет пулсан, ун пеккисене çĕр илме килĕшменни пирки тепĕр заявлени çыртараççĕ. Иск заявленийĕсем те хатĕрлеме тытăннă. Çĕр участокĕсене саккунлă майпа харпăрлăха куçарса пĕтерес ĕçсене кăçал вĕçлеме палăртаççĕ.

Лару ĕçне ял тăрăхĕн территорийĕнчи хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисем, «Путь Ильича» агрофирмăн исполнительнăй директорĕ Валерий Вязов хутшăнчĕç, çĕрсемпе тĕллевлĕ те эффективлă усă курассин ыйтăвĕсене тишкерчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Ыйту – хурав

# Парăм пуррисене хыпарлĕç

**Налук тӳлесси пирки хыпарланине (уведомлени) кам тата хăçан илет? Граждансен налук тӳлессин йĕрки улшăнман-и?**

2011 çулта граждансем иртнĕ çулшăн пурлăхшăн налук тӳлеме уведомленисем илмен. Çакă акă мĕнпе çыхăннă. Пурлăхшăн налук тӳлемелли вăхăтсем улшăнчĕç. Граждансен кăçал пурлăхшăн, транспорт тата çĕр налукĕсене 2012 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен тӳлесе татмалла.

Енчен те гражданинăн налуксенчен пĕрне те пулин (пурлăхшăн, транспорт е çĕр налукĕ) тӳлессипе парăм пур пулсан, ăна уведомлени параççĕ. Налук законодательствипе килĕшӳллĕн налук тӳлекенсене пурне те вăхăт тухиччен пĕр уйăх маларах уведомлени ярса парĕç. Раççей Федераллă налук службин сайчĕ çинче «Сроки направления налоговых уведомлений» Интернет-сервис уçнă. www.nalog.ru сайта кĕрсе ку сервиспа кирек кам та усă курма пултарать.

Налук тӳлессин йĕрки пирки калас пулсан кунта нимĕнле улшăну та çук. Унччнехи пекех налук тӳлекене уведомленипе пĕрле тӳлев документчĕ (квитанци) парĕç. Налука кирек хăш кредит организацийĕнче те тӳлеме май пур. Налук тӳлессипе миçе парăм пур, квитанцисем те çавăн чухлĕ пулĕç.

Енчен те гражданинăн кредит е тӳлев картти пулсан вăл тӳлев суммине хăйĕн картти çинчен те куçарма пултарать. Тӳлев документчĕ çинчи сылтăм енче çӳлте вырнаçнă индекса кăтартас пулать. Налуксене çавăн пекех банкоматсемпе терминалсем урлă наличнăй укçапа та тӳлеме май пур.

Çавна та каласа хăвармалла. Налук тӳлекенсен кĕсье телефонĕпе те хăйсен бюджет умĕнчи парăмĕ пирки пĕлме май пур. Çавна валли 8-919-657-5555 номер çине СМС-пĕлтерӳ ямалла. Унăн тексчĕ – сирĕн ИНН номерĕ. Ку услуга тӳлевсĕр, СМС янăшăн кăна тариф планĕпе укçа тытăнать. Ыйтса пĕлмелли телефон 8-(835-47) 24-1-58.

**Л. МИХАЙЛОВА,**
**ЧР районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ налук инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Шкулччченхи вĕрентӳ учрежденийĕсем

# Тепĕр ача сачĕ пулатех

***Муркашра тепĕр ача сачĕ кирли пирки калаçу чылай пулнă. Район центрĕнче пурăнакансем малтанхи «Елочка» çитменнине юлашки çулсенче уйрăмах çивĕч туйса илчĕç. Муркашра «ачасен черечĕ» вăрăм-и? Муркашри лицей вырăнĕнче çуртран ача сачĕ пулатех-и? Çак ыйтусене район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхне З. ДИПЛОМАТОВĂНА хуравлама ыйтрăмăр.***




– Муркашри «Солнышко» тата «Путене» ача сачĕсене 137 тата 248 ача çӳрет. Эпир тăтăшах районта тата Муркашра уйрăммăн ачасем çуралассин мониторингне ирттерсе ачасен черетне палăртатпăр.

Муркашра пĕр çулччченхи ачасем халĕ пурĕ 61, 1 – 1,5 çултисем – 47, 1,5 – 3 çултисем 69, 3 – 5 çултисем 4 ача. Пирĕн садиксем ачасене çулталăк çурă тултарнă хыççăн йышăнма пултараççĕ. Çапла вара паянхи куна илес пулсан Муркашри тата тепĕр 73 ача (1,5 – 5 çултисем) шкулччченхи вĕрентӳ учрежденийĕн услугисемпе усă кураймасть.

«Солнышко» садикран пĕр ушкăн тухрĕ, çапла вара вĕсем пĕр ушкăн кăна йышăнма пултараççĕ.«Путенерен» икĕ ушкăн тухнине шута илсен июль тата сентябрь уйăхĕсенче пĕршер ушкăн ача йышăнаççĕ.

Кăçал вара Муркашри лицей вырăнĕнче çуртра 60 ача вырнаçмалăх ача сачĕ валли реконструкцилеме палăртнă. Проект тăрăх ĕçе пурнăçламалли хак 21 миллион та 52 пин те 670 тенкĕпе танлашать. Çак суммăран 500 пин тенкине район бюджетĕнчен уйăрса панă. Халĕ подрядчик тупса палăртассипе электронлă майпа аукцион пырать. Хыççăнах килĕшӳсем туса ĕçе пуçăнмалла.

Çатракассинчи «Березка» ача садĕнче черет пулнăран кăçал 20 вырăнлăх ушкăн уçма палăртатпăр. Ăна валли пушă пӳлĕм пур. Çак ача сачĕн çивиттине юсаса çĕнететпĕр. Юсав ĕçĕсене пурнăçлама вырăнти бюджетран укçа-тенкĕ уйăрнă.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**калаçнă.**

# Штрафсем палăрмаллах ӳсрĕç

Çул-йĕр çинче

**Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çул-йĕр хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă административлă право нормисене пăснăшăн саккунпа килĕшӳллĕн явапăх пысăкланчĕ.**

Транспорт кантăкĕсем çутă кĕртесси урапаллă транспорт хатĕрĕсен техника регламенчĕ ыйтнипе килĕшсе тăмалла. Çакăнпа килĕшсе тăман транспортпа çӳренĕшĕн (вăл шутра витĕр курăнакан пленкăпа çыпăçтарнă кантăкисемпе те) ку таранччен 500 тенкĕ штраф панă. Малашне вара çак штраф çумне транспорт хатĕрĕпе çӳреме чарни тата патшалăх регистраци паллине сӳсе илни те хушăнать.

Чарăну тума чаракан çул-йĕр паллисене е çул çинче ӳкернĕ паллăсене пăхăнманшăн (РФ КоАП-ри 12.16 статйин 4 тата 5 пайĕсем) ку таранччен 300 тенкĕ штраф панă пулсан, халĕ – 1500 тенкĕ тата транспорт хатĕрне тытса чараççĕ.

Çул-йĕр правилисене пăсса транспортпа маршрут транспорчĕсен речĕпе çӳренĕшĕн е унта чарăннăшăн халиччен 300 тенкĕ штраф панă пулсан малашне 1500 тенкĕ штраф тӳлеме тивĕ.

Çуран çӳрекенсен каçмалли вырăнĕ çинче е ун патне çитиччен 5 метр маларах чарăнмасан, çапла туma шута илмелли сăлтав çук чухне, е тротуар çинче чарăну йĕркине пăссан 1000 тенкĕ штраф тӳлемелле, транспорт хатĕрне те тытса чараççĕ.

Транспорт хатĕрĕпе маршрут транспорчĕн чарăнăвĕнче е унта çитиччен 15 метр маларах чарăнмасан, пассажирсене лартма е антарса хăварма чарăннисĕр тата шута хумалли сăлтавсăр пуçне, 100 тенкĕпе асăрхаттару вырăнне транспорт хатĕрне тытса чарни тата 1000 тенкĕ штраф кĕтет.

Трамвай çулĕсем çинче чарăнсан е çулăн хĕрринчи ретĕнче мар, ытти ретсем çинче чарăну тусан, шута илмелли сăлтавсăр пуçне, 1500 тенкĕ штраф тӳлемелле, транспорт хатĕрне те тытса чараççĕ.

Транспорт ытти транспорт хатĕрĕсем çӳремелли вырăнта чарăнса ыттисен хусканăвне чарса тăрать пулсан, тоннельре чарăну тусан 2000 тенкĕ кăларса хума тивет, транспорт хатĕрне те тытса чараççĕ.

Чарăнусен ытти йĕркине пăснăшăн (РФ КоАП-ри 12.19 статйин 1 тата 5 пайĕсем) 300 тенкĕ штраф параççĕ. Пурăнмалли зонăсенчи çул-йĕр правилисене пăснăшăн (РФ КоАП-ри 12.28 статйин 1 тата 2 пайĕсем) – 1500 тенкĕ штраф кĕтет.

**Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн районти уйрăмĕ.**

Донор кунĕ

## Юн пачĕç

Муркашри тĕп больницăра июнĕн 28-мĕшĕнче Донор кунĕ иртрĕ. Пирĕн районта пурăнакансем çак пархатарлă мероприятие айккинче хăварманни савăнтарчĕ. Юн пама килнĕ çынсене республикăри юн яракан центр специалисчĕсем тĕплĕн тĕрĕслерĕç.

Çирĕп тĕрĕслев хыççăн 55 çын пурĕ 22 литр юн пачĕ. Çын пурнăçне çăлма юн епле кирлине пуринчен лайăх пĕлекенсем – медицина ĕçченĕсем – чи активлисем пулчĕç – пурĕ 18-ăн юн пачĕç.

**М. ШАРАПОВА,**
**аслă медицина сестри.**

Вăрманçă аса илтерет

## Тимлĕхе ӳстерер

Шăрăх çу кунĕсем тăраççĕ. Çакăн пек çанталăк кашнин умнех хăрушлăх кăларса тăратать. Уйрăм хăрушлăх вăл – пушар. Çакна асра тытса паян кашнин тимлĕхе вуншар хут ӳстермелле, асăрханулăх пирки юлташсене те, ытти çынсене те пĕлтерсех тăмалла. Ахальлĕн…

Манăн паяхни сăмах вăрманти пушар хăрушсăрлăхĕ пирки. Çак вăхăтра ял-хула çыннисем вăрмана кăмпана е çут çанталăк сулхăнĕнче канма йышлăн тухаççĕ. Вĕсем вăрманта пирус туртни, канăва йĕркеленĕ май вучах чĕртни – час-час пулакан йĕркесĕрлĕх. Çакă «хĕрлĕ автана» çул уçакан сăлтав пулни пирки вăрмана тухаканăн манас марччĕ.

Атте-асаттесем лартса ӳстернĕ вăрман пирĕн ачасемпе мăнуксемшĕн те тирпейлĕн упранса юлтăрччĕ. Ку – пирĕн тивĕç.

**В. НИКОЛАЕВ,**
**Ильинка лесничествин участок мастерĕ.**

# Тăваксене ытларах саплаштараççĕ

Патшалăх пулăшăвĕ

***Ял хуçалăхĕнчи йывăрлăхсем пирки паян кашни утăмрах калаçаççĕ. Çав вăхăтрах ыранхи куна пăхса ĕçлекенсем патшалăх пулăшăвĕсемпе çĕнĕлĕхсене алла илсе производство кăтартăвĕсене ӳстерсех пыраççĕ. Çакă ĕçлекенсем умĕнче йывăрлăхсем парăннине çирĕплетсе парать. Ку вара – ыранхи пурнăçăн тата малаллах ĕç-хĕлĕн никĕсĕ.***

***Иртнĕ кунсенче Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви «Чăваш Республикинче продукци тирпейлекен тата апат-çимĕç промышленноçне 2011 – 2013 çулсенче аталантарасси» тĕллевлĕ ведомство программине пурнăçа кĕртессипе ĕç пуçарчĕ. Пирĕн район çак программăпа епле усă курать тата унпа ĕçлеме килĕшӳллисем пур-и? Çак ыйтусем çине хурав шыраса эпир район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – экономика, АПК аталанăвĕ тата муниципаллă пурлăх управленийĕн ертӳçипе В. АНАНЬЕВПА тĕл пултăмăр.***

**– Владислав Кириллович, патшалăх пулăшăвĕ ял тĕлĕшпе ӳссех пырать. «Чăваш Республикинче продукци тирпейлекен тата апат-çимĕç промышленноçне 2011 – 2013 çулсенче аталантарасси» тĕллевлĕ ведомство программи те – çак ырă пуçарусен черетлĕ сыпăкĕ. Пирĕн район çак программа пулăшăвĕпе усă курĕ-и?**

– Кунта хирĕçле хурав пулаймасть те. Патшалăх паракан пулăшупа усă курмаллах. Район администрацийĕн тĕллевĕ çапла. Продукци тирпейлессипе ĕçлекенсем – укçа-тенкĕ шутлакан çынсем. Вĕсем патшалăхăн çак пулăшăвĕпе туллин усă курасса эпир шанатпăр. Хамăр енчен те тĕкĕ парасса шантаратпăр. Продукци тирпейлекен тата апат-çимĕç промышленноçне аталантарас ĕçри пулăшупа пĕрлех патшалăх çĕр улми туса илессипе ĕçлекенсене те пулăшу парасси пирки пĕлтерет. Çак тĕллевлĕ пулăшупа усă курас текен пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем «иккĕмĕш çăкăра» упрама çĕнĕ управ технологиллĕ хранилищĕсем тума, пуррисене паянхи пурнăç ыйтнă пек реконструкцилеме, унта валли çĕнĕ оборудовани туянса вырнаçтарма усă курма пултараççĕ. Çĕр-шыв ВТОна кĕрес умĕнхи тапхăрта çакă питех те пĕлтерĕшлĕ. Ку вăл эпир рынока конкурентлă продукципе тухма пултарассине çыхăннă.

**– Продукци тирпейлекенсене паракан пулăшу экономикăн хăш тытăмĕсене пырса тивет? Мĕнле ĕçсем пурнăçлама укçа-тенкĕ енчен çăмăллăхсем пулĕç?**

– «Чăваш Республикинче продукци тирпейлекен тата апат-çимĕç промышленноçне 2011 – 2013 çулсенче аталантарасси» тĕллевлĕ ведомство программи ял хуçалăхне пĕтĕмĕшле пырса тивет. Кун хыççĕнче пирĕн хресченсем хăйсен вăйĕпе туса илекен аш-какайпа сĕт, çăмарта, тырă-пулăпа çĕр улми, пахча çимĕç хакĕ тăрать. Çакă ял хуçалăх экономикишĕн пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ. Ăçта-ăçта усă курма пулĕ ку пулăшупа? Кун пирки патшалăх пулăшăвĕн йĕркине çапла пăхса хăварнă. Çак пулăшупа усă куракансем ăна ял хуçалăх продукцине пуçламăш тапхăрта тирпейлемелли производство объекчĕсем тума, пуррисене реконструкцилеме тата модернизацилеме яма пултараççĕ. Инженери инфраструктурине тивĕçлĕ шая çитерме, энерги тата ресурс перекетлекен технологисене пурнăça кĕртме, çĕнĕ технологисемпе оборудованисем туянса вырнаçтарма, ашпа сĕт тирпейлеме, тырă-пулă аласа сутлăх хатĕрлеме, çĕр улмипе пахча çимĕçе рынока кăларма янтăлама та çак пулăшупа усă курма пулать. Кам çак пулăшăва маларах алла илĕ – унăн экономики те ыттисенчен сумлăрах малалла утăмлĕ. Çакна никĕсе хывса хатĕрленĕ те ĕнтĕ асăннă программăсене.

**– Тавтапуç, Владислав Кириллович.**

– Хăвăра тав. Ял хуçалăх специалисчĕсемпе ертӳçисем патшалăхăн эпир паян асăннă пулăшăвĕсемпе вăхăтра усă курасса шанас килет. Малашлăх ĕмĕтлисене пирĕнпе çыхăнма ыйтатăп. Пĕрле канашласан, ĕненĕр, тĕрĕсрех çулсем тупăпăр.

**А. БЕЛОВ**
**калаçнă.**

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче



# Черетре – ӳсĕмĕн çĕнĕ чиккисем

«Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт комплексĕнче ĕçлекенсем – шаннă ĕçре ответлăха туйнипе районта та ырă ятлисен йышĕнче. Ырă ят вара пĕччен-иккĕн ĕçленипе пулмасть. Ĕç коллективĕн тăрăшулăхĕ малти вырăнта кунта. Çакна эсир сăн ӳкерчĕкре куракан ĕçченсем кулленхи ĕçĕпе çирĕплетсе пыраççĕ. Сăн ӳкерчĕкре машинăпа ĕне савакан пуян ĕç опычĕллĕ операторсене куратăр. Вĕсем **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)**: 1983 çултанпа хуçалăхра ĕне сăвакан Галина Пантелеймоновна Ковалева, унпа 10 çула яхăн пĕр ушкăнра ĕçлекен Зоя Николаевна Васильева, шкул пĕтернĕренпе 6-мĕш çул амăшĕн хуçалăх ферминчи ĕçне малалла тăсакан Надежда Витальевна Крысина, 8 çула яхăн ĕнесене машинăпа сăвакан оператор Эльвира Валериевна Васильева.

Тăрăшуллă хĕрарăмсем районта пурăнакансене çулсеренех ĕçри пысăк кăтартупа савăнтараççĕ. Юлашки 4–5 çул хушшинче вĕсен вăтам кăтартăвĕ ялanах 5000 килограма çывăх пулчĕ. Ку вăл – районти ĕне сăвакансемшĕн тĕслĕх. «Ушкăнра талăксерен 20–26-шар килограмм сĕт антаракан ĕнесем пулни пирĕн çĕнĕ чиккĕсем пуррине кăтартать. Çакна çу кунĕсенче йӳнĕрех хăй хаклăхĕпа ытларах сĕт суса алла илессипе тăрăшатпăр паян», – теççĕ тăрăшуллă ĕçченсем.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Ачаранах тимлĕхе хăнăхаççĕ

## Ачасем тата çул-йĕр



Çул-йĕр çинче ачасем хăйсене хăрушсăрлăхра туясси – яланхи çивĕч ыйту. Çулсем çинчи инкексенче сахал мар ача сусранланать е тата пурнăçран вăхăтсăр уйрăлать. Çавăнпа та çул çинче тимлĕ те асăрхануллă пулмаллине ачасене тăтăшах каламалла, çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса хамăрăн тĕслĕхпе вĕрентсе пымалла.

«Путене» ача садĕнчи О. Прокопьева воспитатель çак ыйтупа пĕрремĕш çул мар ĕçлет. Тĕрлĕ формăпа иртекен занятисем ачасене питĕ килĕшеççĕ: вĕсем калаçăва хутшăнаççĕ кăна мар, çул-йĕр паллисемпе, çул çинче тĕл пулакан хатĕрсен макечĕсемпе те хавасланса паллашаççĕ. Çул-йĕр çинчи пĕр-пĕр лару-тăрупа çыхăннă самантсене «хутшăнса» сӳтсе явнине вара ачасем уйрăмах килĕштереççĕ. Ольга Юрьевна вĕрентĕвĕн вăйă мелĕпе ытларах усă курать. Çакна ачасем те кăмăллах йышăнаççĕ.

Иртнĕ кунсенче вара «Аистенок» ушкăнра патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн инспекторĕ А. Щербаков пулчĕ **(сăн ӳкерчĕкре)**. Интереслĕ калаçу та, практика занятийĕ те ирттерчĕ. Ачасем çул-йĕр çинчи тĕрлĕ лару-тăрура хăйсене тĕрĕс тытма вĕренчĕç.

А. Щербаков ытти вĕрентӳ учрежденийĕсенче йĕркеленĕ тĕл пулусене те хутшăннă. Отарккăри «Малыш» ача сачĕн ертӳçи М. Иванова та çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисемпе çыхăннă чăн-чăн уяв пулса иртнине çырса пĕлтерчĕ. Шăпăрлансем хăйсен пĕлĕвне татах та анлăлатма пултарнă. Александр Иванович хутшăннă уяв ачасемшĕн питĕ усăллă та асра юлмалла иртнĕ.

Мăн Сĕнтĕрти ача садĕнче те çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕпе тимлесе ĕçлеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем хăйсен ял тăрăхĕн администрацине ача сачĕ çывăхне «Дети» паллă вырнаçтарма çырупа тухнă. Кун пирки редакцие В. Казакова воспитатель хыпарларĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Лагерьсене тĕрĕсленĕ

# Йĕрке пур çĕрте те кирлĕ

Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркашри пайĕ районти шкулсенче çуллахи вăхăтра лагерьсен ĕçне епле йĕркеленине тишкерчĕ. Нумаях пулмасть специалистсем Орининти, Чуманкассинчи тата Йӳçкассинчи вăтам шкулсем çумĕнчи лагерьсенче пулчĕç. Ачасен апатланăвĕпе, медицина пӳлĕмĕсем ĕçленипе ĕçлеменнипе, ачасен занятийĕсем мĕнле пӳлĕмсенче иртнипе тата ытти чылай ыйтупа кăсăкланчĕç.

Тĕрĕслевсем акă мĕн кăтартса пачĕç.

Орининти вăтам шкулта медицина пӳлĕмĕ ĕçлемест. Орининти фельдшерпа акушер пунктĕнче вăй хуракан специалист шкула пăхса тăрать, анчах та унта кашни кун пулмасть-мĕн. Лагерьте малтанласа палăртнă 10 кунлăх меню пур, анчах та ăна пăхăнса пымаççĕ. Кунсерен пĕçерекен апат пĕр пекрех, менюра йӳçĕтнĕ сĕтрен хатĕрленĕ продуктсем тата пулăран хатĕрленĕ апат çук, аш-какайран хатĕрленисем, салатсем, сĕткенпе улма-çырла та çителĕксĕр. Тĕрĕслев вăхăтĕнче усрама палăртнă срокран тухнă сĕт те «тупăннă». Шкулта канализаци тытăмĕ пур, анчах та столовăйĕнчи чашăк-тирĕк çумалли пайри канализаци тулса ларнă.

Чуманкассинчи тата Йӳçкассинчи вăтам шкулсенчи лагерьсенче ачасен апатланăвне лайăх йĕркеленĕ. Кунсеренех пахча çимĕçрен хатĕрлесе тип çу янă салат çитереççĕ, 1, 2 тата 3-мĕш блюдăсем пĕçереççĕ. Меню кашни кунах тĕрлĕрен, ăна тытăнса пыраççĕ. Шкулсенче медицина пӳлĕмĕсем ĕçлеççĕ, унта вырăнсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсен фельдшерĕсем тăрăшаççĕ. Лагерьсенче кун йĕркине пăхăнаççĕ. Çапах та тĕрĕслев вăхăтĕнче ку шкулсенче пысăк мар çитменлĕхсем пулнă (сăмахран, Чуманкассинчи вăтам шкулта апат-çимĕç каяшĕ валли тытнă савăта маркировка туман, Йӳçкассинчи вăтам шкулти туалетра педальлĕ витресем пулман тата ытти те).

**Г. ВОРОБЬЕВА,**
**эксперт специалист.**

## Районта

# Уполномоченнăй улшăнчĕ

Чăваш Республикинче ачасен прависен уполномоченнăйĕн Муркаш районĕнчи представителĕнче ку таранччен Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Н. Ванеркин тăрăшнăччĕ. Николай Григорьевич çак полномочисене хунăран пархатарлă ĕçе малашне Федор Мефодьевич Ягушов иерея пурнăçлама шаннă.

Район центрĕнче пурăнакансем те, ыттисем те ăна Муркашри Владимир Турамăш турăшĕн православи чиркĕвĕн прихут настоятелĕ пулнипе лайăх пĕлеççĕ. Кунсăр пуçне Федор атте районти обществăлла ĕçе те активлă хутшăнать.

Обществăлла йышăну пӳлĕмĕ район администрацийĕн çуртĕнчи 120 пӳлĕмре вырнаçнă (Муркаш сали, Мир урамĕ, 6 çурт). Ĕç вăхăчĕ – кашни уйăхăн пĕрремĕш тата виççĕмĕш кĕçнерни кунĕсем, 13 сехетрен пуçласа 15 сехетчен. Телефон номерĕсем: 8-83541-62-2-31; 8-927-843-24-10.

## Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă çыннăмăра, Шарпаш ялĕнче пурăннă Эрколий Кириллович Кириллова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйха пĕрле пайланăшăн юлташĕсене, тăвансене, кӳршĕсене, ял-йыша, унта пынă мĕн пур çынна пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Кирилловсем.**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ: ЛЮБОЙ РАЗМЕР** 9-10.
**ТЕЛ.: 8-903-346-40-58.**

## Прогноз погоды

| | среда 4 июля | | | | четверг 5 июля | | | | пятница 6 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +19 | +24 | +27 | +21 | +19 | +23 | +24 | +20 | +19 | +18 | +21 | +16 |
| Давление мм | 744 | 744 | 744 | 744 | 744 | 744 | 744 | 745 | 746 | 747 | 748 | 748 |
| Влажность % | 96 | 75 | 51 | 85 | 88 | 79 | 72 | 90 | 84 | 77 | 56 | 64 |
| Ветер м/сек | 1 | 1 | 3 | 3 | 1 | 2 | 2 | 3 | 4 | 6 | 6 | 4 |
| | В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю | С | С | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В |
| Солнце восход / заход | | 04:15 | 21:39 | | | 04:16 | 21:39 | | | 04:17 | 21:38 | |
| Луна восход / заход | | 21:38 | 05:07 | | | 22:05 | 06:30 | | | 22:26 | 07:54 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-20.**

**Продается дом с участком в Большесундырском сельском поселении, д. Б. Карачкино. Тел.: 8-987-667-10-44.**

* * *

**Продаю Renault Sumbol 2005 года выпуска, черный, двигатель 1.4 л, ГУР, иммобилайзер, сигнализация.**
**Тел.: 8-953-016-98-05. 1-2.**

* * *

**ОТКРЫЛСЯ МАГАЗИН ХОЗТОВАРЫ «У ВАДИМА» НА ТЕРРИТОРИИ МОРГАУШСКОГО РЫНКА, СЗАДИ ХЛЕБНОГО МАГАЗИНА «КАЛАЧ»**
**ВСЕ ДЛЯ ДОМА: хозяйственные товары; инструменты; электротовары; сантехника; канализационные трубы, шланги, угольники, муфты и др.; одеяла, подушки, постельные комплекты, комплекты для новорожденных; посуда; кухонные электроприборы; лаки, краски; бытовая химия; бытовой инвентарь; садовый инвентарь.**

* * *

**Продаю дом с земельным участком.**
**Тел.: 8-903-322-82-12. 1-2.**

* * *

**Утерянный аттестат А № 829189, выданный Орининской СОШ в 1995 году на имя Сальникова Николая Витальевича, считать недействительным.**

* * *

**Требуются (с. Моргауши) муж/жен: операторы на станки (возможно обучение) з/п от 10000 руб.; рабочие на окрасочную линию (возможно обучение) з/п от 9000 руб.; разнорабочие з/п от 8000 руб.; Тел.: 8-987-662-31-99 звонить с 8-00час. до 17-00 час.**

* * *

**Утерянное свидетельство о восьмилетнем образовании № 718785, выданное Шатьмапосинской восьмилетней школой Моргаушского района ЧАССР 16 мая 1975 года на имя Михайлова Анатолия Вячеславовича, считать недействительным.**

* * *

**Продаю земельный участок в д. Семенькасы, ул. Новая, газ, свет, вода рядом. Тел.: 8-927-854-85-40.**

* * *

**Муниципальному унитарному предприятию жилищно-коммунального хозяйства «Моргаушское» на временную сезонную работу требуются рабочие строительных профессий. Оплата труда – сдельная.**

* * *

**Виççĕ пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп.**
**Тел.: 8-937-397-67-25.**

* * *

**Продаю песок речной, ОПГС с доставкой.**
**Тел.: 44-01-10. 4-10.**

* * *

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА И НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 6а (здание котельной). Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 10-10.**

* * *

**Дорогие жители с. Моргауши и Моргаушского района!**
**В здании Дома быта после капитального ремонта на 2-ом этаже открылся САЛОН КРАСОТЫ «МЕЧТА». Предлагаем все виды парикмахерских услуг: стрижка, покраска, маникюр, педикюр. Приглашаем вас посетить наш салон. Для всех клиентов в нашем салоне скидки 5% до 01.08.2012 года.**

* * *

**Продаем зерноуборочный комбайн «Нива» СК-5 2001 года выпуска. Обращаться по тел.: 8-953-015-00-70. 2-2.**

* * *

**Ноябрь уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-960-309-48-13.**

* * *

**Продается корова красно-белой масти, 6 лет (в с. Юськасы). Тел.: 8-905-197-33-77.**

* * *

**Утерянный аттестат А № 0989392, выданный Сятракасинской средней школой в 1996 году на имя Федорова Эдуарда Валерьевича, считать недействительным.**

* * *

**Требуются разнорабочие на Ямал.**
**Тел.: 8-903-379-28-64.**

* * *

**Молодая семья снимет квартиру в с. Моргауши. Чистоту и порядок гарантируем. Тел.: 8-937-373-04-05.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**от производителя.**
**Замер.**
**Доставка бесплатно.**
**Низкие цены.**
**Тел.: 8-987-576-65-62.** 9-10.

**Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"**
**КИРПИЧ**
**ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ**
**более 500 видов**
Тел: (8352) 30-55-10, 73-84-12 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

Ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем, юлташĕсем, ял-йыш Шарпаш ялĕнче пурăннă
**Эрколий Кириллович**
**КИРИЛЛОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тарăннăн, чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.**
**Пичете панă 03.07.2012 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4493.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.